28-мĕш çул тухать. Хакĕ 20 пус.

1945 ДЕКАБРЬ 9 ВЫРСАРНИКУН 239 (6990) №

Чăваш Коммуни

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

ВКП(б) Обкомĕпе Шупашкар хула комитечĕн, ЧАССР Верховный Советĕн тата Шупашкар хула Совечĕн хаçачĕ

Профсоюзсен паха задачи

Вăрçăн йывăр тĕрĕслевĕсене пурăнса ирттернĕ миллионшар совет çыннисем мирлĕ ĕçе таврăнаççĕ. Совет халăхĕ тăваттăмĕш пилĕкçуллăх планне пурнăçа кĕртме хатĕрленет. Çав пилĕкçуллăхăн тĕп задачи—çĕршыври халăх хуçалăхне юсаса ура çине тăратасси тата ăна вăрçăчченхинчен чылай вăйлăрах тăвасси, халăхăн пурнăç условийĕсене лайăхлатасси пулса тăрать.

Çĕршыв вăйлăн аталаннă тапхăрта совет профсоюзĕсем умне ответлă задачăсем тухса тăраççĕ. Тĕп задачăсенчен пĕри вăл—рабочисемпе служащисен материальнăй тата йăлапа культура тĕлĕшĕнчи ыйтăвĕсене тивĕçтерессипулать. Хальхи вăхăтра çак задача чи малти вырăна тухса тăрать, çав задачăна татса парассишĕн профсоюзсен тимлĕн ĕçлемелле.

Вăрçăн чи йывăр кунĕсенче те большевиксен партийĕпе совет правительстви ĕççыннисен пурнăçне лайăхлатма тăрăшрĕç. Предприятисем çумĕнче ОРС-сем, подсобнăй хуçалăхсем туни, пĕчченшерĕн тата коллективпа пахчаçимĕç лартса тăвасине организацилени, пурăнмалли çĕнĕ çуртйĕрсем туни, çĕнĕрен ача садĕсемпе яслисем уçни,—çаксем пурте ĕнтĕ çав тери пысăк ĕç. Вĕсене профсоюзсем активлăн пулăшнипе тунă. Вăрçă пирĕн çĕнтерӳпе пĕтни пире ĕççыннисен материальнăй тата йăлапа культура тĕлĕшĕнчи ыйтăвĕсене татах та лайăхрах тивĕçтерме май парать.

Вăрçă пĕтнĕ хыççăнах чылай профсоюз организацийĕсем рабочисемпе служащисен йăла тĕлĕшĕнчи ыйтăвĕсене тивĕçтерес ĕçе çителĕксĕр организацилерĕç, столовăйсемпе магазинсен ĕçне, пурăнмалли çуртйĕрсем мĕнле пулнине общество енчен контроль туса тăрас ĕçе анлăн сарса ямарĕç. Профсоюзсен ĕçне вĕсем ĕççыннисен материальнăй тата йăлапа культура тĕлĕшĕнчи ыйтăвĕсене мĕнле тивĕçтерни тăрăх хакламалла.

Нумаях та пулмасть ВЦСПС секретариачĕн ларăвĕнче Вăтам машиностроени наркомачĕн предприятийĕсенче пурăнмалли çуртйĕр тăвас ĕç мĕнле пынине пăхса тухса çакна палăртнă: автомобиль промышленноçĕнчи рабочисен профсоюзĕн центральный комитечĕ ку ыйтăва 9 хутчен пăхса тухнă пулин те, унта халĕ те нимĕнле результатсем те курăнмаççĕ-ха. Вăтам машиностроени наркомачĕ пурăнмалли çуртйĕр тăвас ĕçе тивĕçлипе хакламасть, строительство планне тултарса пыраймасть, профсоюзсен центральный комитечĕ вара çĕнĕрен çĕнĕ резолюцисем йышăнса ларать.

Предприятисенче ялан ĕçлекен кадрсене çирĕплетесси рабочисене пурăнмалли çуртйĕрсем туса парассипе тата вĕсене йăла тĕлĕшĕнчен пулăшса пырассипе питĕ таччăн çыхăнса тăрать. Кадрсене чăннипех предприятире нумай вăхăт хушши ĕçлемелле тăвас тесен, хуçалăхпа профсоюз органĕсен рабочисемпе служащисен хваттерĕсем çинчен кашни кун тăрăшмалла, пурăнмалли çуртйĕр строительствин ĕçне хутшăнса, ăна мĕнле тултарса пынине тĕрĕслесе пымалла.

Профсоюзсен столовăйсемпе магазинсен ĕçне тăтăшах тĕрĕслесе тăмалла. Профсоюз организацийĕсем 600.000 контролер уйăрнă. Çав контролерсен ĕнтĕ столовăйсен ĕçне, апат пахалăхне лайăхлатма тăрăшмалла, вĕсем ăна тума пултараççĕ те. Профсоюз организацийĕсен столовăйсемпе магазинсенчи çитменлĕхсене вăхăтрах палăртса пĕтермелле. Анчах та пирĕн ОРС-сен, столовăйсемпе магазинсен ĕçĕнчи çитменлĕхсене формально регистрацилесе çеç ларакан профсоюз организацийĕсем те пур-ха. Сăмахран, Ново-Макеевка заводĕнчи общество контролерĕсем çавăн пек çитменлĕхсем çинчен 100 акт ытла çырнă. Анчах та çав актсенчен нумайĕшĕ завод ОРС-ĕнче пĕр йĕрсĕрех çухалнă. Заводри профсоюз комитечĕ вара çакнашкал çитменлĕхсемпе килĕшсе ларнă.

Заводсемпе фабрикăсен подсобнăй хуçалăхĕсем вĕсем—рабочисемпе служащисене апат-çимĕç продукчĕсем хушса памалли питĕ паха çăлкуçĕ пулса тăраççĕ. Анчах та чылай подсобнăй хуçалăхсем хăйсене шанса панă ĕçе тӳрре кăлараймаççĕ-ха. Профсоюзсен общество контролĕ подсобнăй хуçалăхсен пур участокĕсене те тĕрĕслесе тухмалла. Подсобнăй хуçалăхсенчен илнĕ продуктсемпе рабочисен тата служащисен апат-çимĕçне палăрмаллах лайăхлатасси—кашни профсоюз организацийĕн таса тивĕçĕ пулса тăрать.

Хăшпĕр профсоюз организацийĕсем хуçалăх руководителĕсем хыççăн кайса çапла калаççĕ: рабочисемпе служащисене апат-çимĕç парасси центртри снабженирен килет, теççĕ, çавăнпа вара вĕсем хăйсем нимĕн те туманнине пытарса хăварма тăрăшаççĕ. Паллă ĕнтĕ, куллен кирлĕ таварсемпе апат-çимĕç продукчĕсене центртан илсе ларма питĕ ансат. Анчах та халĕ пирĕн вырăнти ресурсемпе анлăрах усă курмалла, куллен кирлĕ таварсене ытларах та ытларах туса кăлармалла, заводсенчи подсобнăй хуçалăхсенче тырпул тухăçне хăпартмалла, апат-çимĕç продукчĕсене вăрăсемпе жуликсенчен тимлĕнрех сыхламалла.

Профсоюз руководителĕсене, цехри комитет председателĕнчен пуçласа союзăн центральный комитечĕн председательне çитиех, вĕсем хăйсен пултарулăхне сăмахпа мар, ĕçпе кăтартса парсан, ĕççыннисен материальнăй тата йăла тĕлĕшĕнчи ыйтăвĕсене тивĕçтерме чăннипех тăрăшсан çеç вĕсене массăсем сума сунса хисеплеççĕ. Профсоюзсен ĕç укçи, производствăри ĕçе организацилесси, çĕнĕ техникăна кĕртсе пырасси, рабочисен производствăри квалификацине ӳстересси, ĕçе сыхласси йышши паха пур ыйтусене татса панă çĕре те хутшăнмалла. Ача сачĕсемпе яслисен, сывлăх пункчĕсен, заводри поликлиникăсен, кану çурчĕсемпе санаторисен ĕçĕсем, рабочисене вут-шанкă тупса парасси, кĕпе-тумтирпе атă-пушмак тата хуçалăхри ытти япаласене юсамалли мастерскойсем çителĕклĕ уçасси питĕ пысăк вырăн йышăнса тăрать. Çак ĕçсене пурне те профсоюзсен тĕрĕслесе пымалла, вĕсен ĕçне тивĕçлипе организацилеме пулăшмалла.

Совет профсоюзĕсем вĕсем — рабочи класăн чи массăллă организацийĕ. Вăл миллионшар çынна пĕтĕçтерсе тăрать. Ĕççыннисен ыйтăвĕсемпе нушисене тивĕçтерессишĕн тимлĕн тăрăшасси кашни профсоюз руководителĕн чи малтанхи тивĕçĕ пулса тăрать. Рабочи, е работница профсоюза заявленин е жалоба панă пулсан, çавăн пек кашни заявленипе жалобăна вăхăтра пăхса тухмалла. Ĕççыннин жалобине профсоюз организацийĕ пĕр-пĕр учреждение ярса панă пулсан, завкомăн е союзăн центральный комитечĕн çак жалоба тăрăх учреждени мĕн туннине тăтăшах тĕрĕслесе пымалла. Çав жалоба тĕрĕс пулсан, вара жалоба паракан çын ыйтнине пĕр сăмахсăрах тивĕçтермелле.

Рабочисемпе служащисен пухăвĕсем профсоюзсен ĕçне чылай лайăхлатма пулăшаççĕ. Анчах та нумай предприятисемпе учрежденисенче юлашки вăхăтра çавăн пек пухусене хисеплемеççĕ-ха, вĕсене хутран-ситрен çеç пухаççĕ, предприяти руководителĕсен доклачĕсене, çавăн пекех тата ĕççыннисен йăлине организацилессишĕн ответлă çынсен доклачĕсене сӳтсе-явмаççĕ. Çапла вара рабочисем хăйсен материальнăй тата йăла тĕлĕшĕнчи ыйтăвĕсене тивĕçтерессишĕн тăрăшман çынсене критикăлаймаççĕ. Çакăн пек практика, паллах, сиенлĕ, ăна май килнĕ таран хăвăртрах пĕтермелле.

Ĕççыннисен материальнăй тата йăла тĕлĕшĕнчи ыйтăвĕсене пур енчен те тивĕçтерме тăрăшни пирĕн промышленноçа, халăх хуçалăхĕн пур отраслĕсене те малалла аталантарса пыма, хамăрăн Тăван çĕршывăн хăватлăхне малалла çирĕплетсе пыма пулăшĕ.

(«Правда» хаçатăн декабрĕн 7-мĕшĕнчи умстатьи).

Участоксенчи суйлав комиссийĕсен составне кандидатсем тăратаççĕ

ШУПАШКАР ХУЛИНЧЕ

Хулари предприятисемпе учрежденисенчи рабочисемпе служащисен коллективĕсем участоксенчи суйлав комиссийĕсен составне кандидатсем тăратаççĕ.

Челноков юлташ главнăй инженер пулса ĕçлекен заводри цехсенче рабочисен, инженерсемпе техниксен пухăвĕсенче участоксенчи суйлав комиссийĕсен составне кандидатсем тăратас ыйтăва сӳтсе явнă. Çав пухусенче, пĕр саслă пулса, участоксенчи суйлав комиссийĕсен составне заводри инженерăн Алексей Алексеевич Плешанов юлташăн, цех начальникĕн Константин Александрович Капранов юлташăн тата отдел начальникĕн Василий Антонович Плотников юлташăн кандидатурисене тăратнă.

ЧУРАЧĂК РАЙОНĔНЧЕ

СССР Верховный Совет суйлавне хатĕрленнĕ май, сăмахран, участоксенчи суйлав комиссийĕсен составне кандидатсем тăратнă май районри ĕççыннисем хушшинче политикăллă активлăх вăйлăн ӳссе пыни палăрать. Колхозниксем государство умĕнчи парăмсене парса татас тĕлĕшпе тăрăшса ĕçлеççĕ. Молотов ячĕпе тăракан колхоз декабрĕн 1-мĕшĕпе 5-мĕшĕ хушшинче государствăна 550 центнер тырă парса, государство умĕнчи парăма татнă. Çавăн пекех Буденный ячĕпе тăракан колхоз иртнĕ 5 кун хушшинче государствăна 250 центнер тырă панă. «Моряк» колхоз государствăна 150 центнер тырă парса плана тултарнă. Асăннă колхозсем ку таранччен кая юлса пыракан колхозсем шутланнă пулсан, халĕ вĕсем тăрăшса ĕçленипе малтисен ретне тухма пултарчĕç.

«Трактор» колхозри колхозниксем хăйсен пухăвĕнче Отечественнăй вăрçă инвалидне Иван Павлович Павлов юлташа суйлав комиссийĕн составне кандидата тăратнă. Хĕрлĕ Çарта пулса Павлов юлташ «Хĕрлĕ Çăлтăр» орденĕ тата «За отвагу» медаль илме тивĕçлĕ пулнă.

«Прожектор» колхозри колхозниксем чи лайăх бригадира Анастасия Павловна Павлова юлташа кандидата тăратнă. Колхозра лайăх ĕçленĕшĕн ăна Чăваш АССР Верховный Совет Президиумĕн Хисеплĕ грамотипе наградăланă.

Районри коммунистсен организацийĕнчен Кăшнаруйĕнчи çичĕ çул вĕренмелли шкул директорне Василий Никонорович Никоноров юлташа кандидата тăратнă. Никоноров юлташ икĕ орден илсе 1944 çулта Хĕрлĕ Çартан таврăннă.

Пуçламĕш тата вăтам шкулсенчи работниксен профсоюзĕн райкомĕ 30 çул хушши учитель пулса ĕçлекен Яков Ефимович Ефимов юлташа кандидата тăратнă. Ефимов юлташ иртнĕ суйлавсенче те участокри суйлав комиссийĕн составĕнче ĕçленĕ.

Районра суйлава пирвайхи хут хутшăнакан çамрăксене те участоксенче суйлав комиссийĕсен составне кандидата тăратаççĕ. Малти Ямашри колхозниксен пухăвĕ Василий Митрофанович Митрофанов юлташа, Ленин ячĕпе тăракан колхозри колхозниксем Павел Родионович Смирнов юлташа кандидата тăратма йышăннă. Смирнов юлташ Отечественнăй вăрçăра пулса правительство наградисене илме тивĕçлĕ пулнă.

КУСЛАВККА РАЙОНĔНЧЕ

Куславкка районĕнче участокри суйлав комиссийĕсен составне кандидатсем тăратас ĕç активлăн пулса иртет.

Куснафти «16-ый Партсъезд» колхозри колхозниксем участокри суйлав комиссийĕн составне Анна Васильевна Сусликова колхозница кандидатурине тăратнă. Сусликова юлташ 1945 çулта колхозра ĕçлесе 385 ĕçкунĕ тунă.

Пуçламĕш тата вăтам шкулсенчи работниксен профсоюзĕн районри организацийĕ Александр Терентьевич Некрасов юлташ кандидатурине тăратнă. Вăл Пăрмасри пуçламĕш шкулăн заведующийĕ пулса ĕçлет. Халăха çутта кăларас ĕçре çав тери пысăк çитĕнӳсем тунăшăн ăна правительство Ленин орденĕпе наградăланă тата РСФСР-ĕн тава тивĕçлĕ учителĕ ятне панă.

Куславкка МТС-ĕнчи работниксен коллективĕ çамрăксен трактор бригадин бригадирне, «Ĕçри хастарлăхшăн» медальпе наградăланă Андрей Тимофеевич Скворцов юлташа кандидата тăратма йышăннă.

Куславкка комбинатĕнчи профсоюз организацийĕнчен Семен Николаевич Кутузов юлташа, «Ĕçлĕх Хĕрлĕ Ялавĕ» орденĕ илнĕскере, тата «Хисеп Палли» орденпа наградăланă Михаил Данилович Данилов столяра кандидата тăратнă.

Районри коммунистсен организацийĕнчен участокри суйлав комиссийĕн составне Совет Союзĕн Геройне Александр Григорьевич Тухланов юлташа кандидата тăратнă.

Малта пыракан «Динамо» колхозри колхозниксен пухăвĕ Севастьян Филиппович Агеев колхозника кандидата тăратма йышăннă. Агеев юлташ колхозра тăрăшса ĕçлесе 210 ĕçкунĕ тунă.

СĔНТĔРВĂРРИ РАЙОНĔНЧЕ

Хулари тата районри предприятисемпе учрежденисен коллективĕсем тата колхозсем участоксенчи суйлав комиссийĕсен составне кандидатсем тăратаççĕ.

Финанспа банк работникĕсен профсоюзĕн районри комитечĕ Нина Егоровна Егорова кандидатурине тăратма йышăннă. Егорова юлташ Ольтикасси ял Советĕнче финагент пулса ĕçлесе, финанс планне кашни уйăхрах ирттерсе тултарать. Финанс тĕлĕшпе лайăх ĕçленĕшĕн Ольтикасси ял Совечĕ ВКП(б) райкомĕпе райсовет исполкомĕн куçса çӳрекен Хĕрлĕ Ялавне тытса тăрать.

Ольтикасси ял Советне кĕрекен «Заря» колхоз колхозникĕсем участокри суйлав комиссийĕн составне тухăçлă тырпул мастерне Галина Степановна Степанова юлташа кандидата тăратнă.

Астакассинчи «Лесоруб» промартель членĕсем артель председательне Григорий Корнилович Корнилов юлташа кандидата тăратма йышăннă. «Лесоруб» артель уйăхран уйăха производство планне 200 процент тултарать. Артель ĕçне лайăх ертсе пынăшăн Корнилов юлташа Чăваш АССР Верховный Совет Президиумĕн Хисеплĕ грамотипе наградăланă, артеле Чăваш АССР Совнаркомĕн куçса çӳрекен Хĕрлĕ Ялавне панă.

«Большевик» колхозри колхозниксем Михаил Трофимович Яранов орденоносеца кандидата тăратнă. Яранов юлташ колхозра тимĕрç пулса ĕçлет.

Шуркассинчи çыхăну пайĕнче ĕçлекенсен коллективĕ Нина Александровна Трутнева юлташа кандидата тăратнă. Вăл Шуркассинчи çыхăну агентствин заведующийĕ пулса ĕçлет.

ВĂРНАР РАЙОНĔНЧЕ

Участоксенчи суйлав комиссийĕсен составне кандидатсем тăратас ĕç Вăрнар районĕнче те активлăн пулса иртет.

«Победа» колхозри колхозниксен пухăвĕ, пĕр саслă пулса, Петр Егорович Васьков юлташа кандидата тăратма йышăннă. Вăл нумаях пулмасть Хĕрлĕ Çартан таврăннă, ВКП(б) членĕ, Вăрнарти райсберкасса заведующийĕ пулса ĕçлет.

«Победа» колхозри колхозниксен пухăвĕнчех колхоз бригадирне Степан Кузьмич Кузьмин юлташа кандидата тăратма йышăннă.

Пуçламĕш тата вăтам шкулсенчи работниксен профсоюзĕн районри организацийĕ Хирпуçĕнчи çичĕ çул вĕренмелли шкул учительницине Агафия Ивановна Иванова юлташа кандидата тăратнă.

ВЦСПС-ăн XIV-мĕш пленумĕ

ВЦСПС пленумĕнче декабрĕн 7-мĕшĕнче ВЦСПС секретарĕ Н. В. Попова «Профсоюзсен культурăллă-массăллă ĕçне лайăхлатасси çинчен» доклад туса панă.

Попова юлташ çакна палăртнă: профсоюз организацийĕсем юлашки çулсенче нумай клубсемпе хĕрлĕ кĕтессене тата библиотекăсене çĕнĕрен ĕçлеттерме пуçланă. Хальхи вăхăтра профсоюзсен 4.500 клуб пур. Культурăллă-массăллă ĕç валли кăçал пĕр миллиард тенкĕ ытла укçа уйăрса панă.

Профсоюзсен культурăллă ĕçĕнче библиотекăсем пысăк вырăн йышăнса тăраççĕ. 1945 çул пуçланнă тĕле пирĕн 3.314 библиотека пулнă, вĕсенче 19,5 миллион кĕнеке пулнă.

Попова юлташ хăйĕн доклачĕн юлашки пайĕнче профсоюзсен физкультурăпа спорт ĕçĕ çинчен каланă. Вăл çапла каланă: профсоюз организацийĕсен хальхи вăхăтра спорт сооруженийĕсене пурне те çĕнĕрен хута ямалла, предприятисемпе учрежденисенче тата шкулсенче физкультура ĕçне йĕркелесе ямалла. Ĕççыннисене пирĕн Тăван çĕршывпа тата унăн пуянлăхĕпе паллаштаракан экскурсисем йышлăрах тумалла.

Попова юлташăн доклачĕ тăрăх пренисем пуçланса кайнă.

ВЦСПС пленумĕ декабрĕн 8-мĕшĕнче хăйĕн ĕçĕсене пĕтерет. (ТАСС).

Юпса пыракан ял Советсен ĕç хăвăртлăхне ӳстермелле

ЕЛЧĔК. СССР Верховный Совечĕн суйлавĕ ячĕпе пыракан социализмлă ăмăртăва хутшăнса, районри финанс работникĕсем укçа-тенкĕ пухас ĕçе чылай лайăхлатрĕç.

Халăхран укçа-тенкĕ пухас тĕлĕшпе уйрăмăнах Аслă Пăла Тимеш ял Совечĕ лайăх ĕçленине палăртмалла. Ку ял Совечĕ çак кварталти плана 105 процент тултарнă. Ворошилов ячĕпе тăракан колхозра укçа-тенкĕ парса татман пĕр колхозник та çук.

Аслă Пăла Тимеш ял Совечĕ финанс планне срокчен тата пур тӳлевсем тăрăх та тултарни ял Совет председателĕ Овчинниковпа финанс агенчĕ Зайцев юлташсем тата унти колхоз председателĕсемпе ялти актив тăрăшса ĕçленинчен килет. Вĕсем укçа-тенкĕ пухас ĕçе хуçалăхри ытти ĕçсемпе çыхăнтарса тата вĕсемпе пĕр вăхăтра туса пыма пĕлеççĕ.

Укçа-тенкĕ пухас тĕлĕшпе Тăрăм ял Совечĕ те (председателĕ Баймушкин, финанс агенчĕ Иванова) лайăх ĕçлет. Çавăн пекех Патрекел, Аслă Елчĕк, Каркалар тата Елчĕк ял Совечĕсем те финанс планне ăнăçлăн тултарса пыраççĕ.

Анчах та районри хăшпĕр ял Совечĕсем укçа-тенкĕ пухас тĕлĕшпе тивĕçлипе ĕçлемеççĕ-ха. Акă Кĕçĕн Таяпа ял Совечĕ IV-мĕш кварталти финанс планне пĕтĕмпе те 20 процент ытларах кăна тултарнă. Шăмалак, Хăвăл Çырма, Чăваш Тăрăм тата Кармал ял Совечĕсем те укçа-тенкĕ пухмалли татăклă уйăхлăхра унчченхи пекех сӳрĕк ĕçлеççĕ. Вĕсем çак кварталти плана пурĕ те 30—35 процент кăна тултарнă.

Колхозсем вăрман хатĕрлес ĕçре

ХĔРЛĔ ЧУТАЙ. Районри колхозсем вăрман промышленноçĕнче ĕçлекенсен республикăри канашлăвĕ СССР Верховный Совечĕн суйлавĕ ячĕпе социализмлă ăмăрту пуçарса яма чĕнсе каланине пысăк хаваслăхпа кĕтсе илчĕç. Чапаев ячĕпе тăракан колхоз членĕсем республикăри канашлу чĕнсе каланине пухура сӳтсе-явнă хыççăн IV кварталти вăрман хатĕрлесе турттармалли плана срокчен тултарма обязательство илчĕç. Халĕ ку колхозран кашни кунах вăрманта 8 çын лашапа, 8 çын çурран ĕçлеççĕ. Вăрман турттарас тĕлĕшпе уйрăмăнах В. Яхатин, А. Аконин, М. Назаров комсомолецсем паха тĕслĕхсем кăтартса ĕçлеççĕ. Вĕсем кулленхи задание 130 — 150 процент таран тултарса пыраççĕ.

Çавăн пекех вăрман промышленноçĕнче ĕçлекенсен республикăри канашлăвĕ чĕнсе каланине Энгельс ячĕпе тăракан, «День урожая», «Коллективист» колхозсенче те пысăк çĕкленӳпе сӳтсе-яврĕç. Асăннă колхозсем вăрман хатĕрлевне планпа кăтартнă чухлех çынсемпе турттăм вăйĕ уйăрса янă.

Вăрман хатĕрлевĕнче политикăллă-массăллă ĕçе те тивĕçлипех йĕркеленĕ. Вăрманта ĕçлекенсем хушшинче агитмассăллă ĕçе туса пыма мехлесопунктри пуçламĕш парторганизаци ятарласа агитаторсем уйăрнă. Вĕсем халĕ рабочисене суйлав законне ăнлантарса параççĕ. Ку тĕлĕшпе А. Здорова тата А. Куранов агитаторсем лайăх ĕçлеççĕ.

П. ТИХОНОВ.

Вăрман хатĕрлевне вăйлатар

ЭЛĔК. Кӳпеш Тени ял Советĕнчи «Коминтерн» колхоз вăрман промышленноçĕнче ĕçлекенсен республикăри канашлăвĕ чĕнсе каланине сӳтсе-явнă хыççăн вăрман хатĕрлевне планпа кăтартнă чухлех ĕç вăйĕ уйăрса янă.

Анчах районĕпе илсен, вăрман хатĕрлевне ытла та çителĕксĕр хутшăннă-ха. План тăрăх районĕпе вăрманта 300 çын ĕçлемелле пулсан, паянхи куна кунта пурĕ те 80 çын çурран, 31 çын лашапа ĕçлеççĕ. Уйрăм колхоз председателĕсем государствăна улталас çул çине тăнă. «1-ое мая» колхоз председателĕ Гаврилов юлташ «вăрмана ĕç вăйĕ ятăм», тесе райплана суя сведени парса ларать. Çав вăхăтрах ку колхозран вăрман хатĕрлевĕнче пĕр çын та ĕçлемест. «Маяк» колхозра вăрмана ĕçлеме кайма инвалидсене уйăрнă.

Яркунь-Ушкăнь, Элĕк тата Татмăш ял Совет председателĕсем вăрмана ĕç вăйĕ уйăрса ярас тĕлĕшпе колхозсене çителĕксĕр пулăшса пыраççĕ. Элĕк ял Советне (председателĕ Киселев (юлташ) пурĕ 8 колхоз кĕрет, паянхи куна вĕсем пĕри те вăрман хатĕрлеме тытăнман.

Ф. КАТЕЕВ.

Суйлава хатĕрленнипе хавхаланса

ЕТĔРНЕ. Ирçе ял Советĕнчи пуçламĕш парторганизаци (секретарĕ Е. Кузьмина юлташ) коммунистсемпе ялти активăн пухăвне туса ирттерчĕ. Пухура вăрман промышленноçĕнче ĕçлекенсен республикăри канашлăвĕ чĕнсе каланине сӳтсе-яврĕç. Фронтран таврăннă Е. Шишкин коммунист пухура çапла каларĕ: «Пирĕн вăрман хатĕрлемелли плана 1946 çулхи февралĕн 10-мĕшĕ тĕлне 75 процент тултарма пур майсем те пур», терĕ.

Кун хыççăн коммунистсемпе активистсем ял Советне кĕрекен колхозсенче колхозниксен пухăвĕсене туса ирттерчĕç. 2-мĕш Ирçери «Комбайн», 1-мĕш Ирçери «Сура» тата Суворов ячĕпе тăракан колхозсем социализмлă ăмăртăва тухрĕç.

Халĕ ку колхозсенче вăрман хатĕрленĕ çĕрте кунсерен 10-шар çын, турттарнă çĕрте 6-шар лав ĕçлеççĕ. «Комбайн» колхозри фронтовиксем Е. Шишкин тата П. Степанов ертсе пыракан бригадăсем вăрман хатĕрлес ĕçре кулленхи нормăпа ирттерсе тултарса пыраççĕ.

Çав хушăрах вăрман хатĕрлемелли плана хакламан колхозсем те пур. Еликнăри «Чуваш ЦИК» тата Çĕнĕ Етĕрнери «Комсомол» колхозсенчен вăрманта пĕр çын та ĕçлемест.

Г. ТАМИР.

„Большевик" колхозăн клубĕнче

Ишлей районĕнчи «Большевик» колхоз кăçалхи ялхуçалăх ĕçĕсене ăнăçлă вĕçлерĕ. Халĕ колхозниксем СССР Верховный Советне суйлама хатĕрленеççĕ. Çав майпа ĕç хыççăн колхоз клубне пухăнса суйлав Положенине, СССР Конституцине вĕренеççĕ. Колхоз клубĕ пысăк. Унта вуламалли, кружоксен занятийĕсене ирттермелли уйрăм пӳлĕмсем, библиотека пур. Вуламалли пӳлĕмре партипе правительство руководителĕсен портречĕсем, çĕнĕ лозунгсемпе плакатсем, хаçат витрини, колхоз ĕçĕнче малта пыракан колхозниксен ячĕсене çырнă Хисеп хăми пур. Клуб çумĕнче «Сулăм» ятлă стена хаçачĕ йĕркеллĕ тухса тăрать. СССР Верховный Советне суйлама хатĕрленсе клубра Сталинла Конституци çинчен çырнă кĕнекесемпе статьясен витринине тунă. Çавăнтах тĕрлĕрен справкăсем памалли сĕтел пур. Унта клуб совечĕн членĕсемпе комсомолец-агитаторсем дежурнăй пулса ĕçлеççĕ. Колхозниксем кирек мĕнле ыйтупа пырсан та вĕсене тĕплĕ ответ параççĕ. Справкăсем памалли сĕтел заем выляvĕсене тĕрĕслесе чылай выляvсене тупса панă.

Клуба колхоз çумĕнчи комсомолăн пуçламĕш организацийĕ яланах пулăшса тăрать. Колхозри комсомолецсемпе çамрăксен вăйĕпе хĕл каçа хутмалăх вутă хатĕрлесе турттарса панă. Клуб çумĕнче тĕрлĕ кружоксем организациленĕ, вĕсен ĕçĕсене план тăрăх туса пыраççĕ. Кунта уйрăмах комсомолецсем ертсе пыракан драмкружок, ташăпа юрă тата литература кружокĕсем лайăх ĕçлеççĕ.

Акă, хĕл вăхăтĕнчи вăрăм каçсенчен пĕри. Колхоз клубĕнчи çутă катаранах курăнать. Кунта паян СССР Верховный Советне суйламалли Положение вĕренмелли кружокăн занятийĕ иртет. Хĕрлĕ хăмач витнĕ сĕтел тавра 25 колхозник пуçтарăнса ларнă. Клуб заведующийĕ В. Чигаркин юлташ суйлав Положенине тĕплĕн ăнлантарать, час-часах хаçатри статьясене вуласа парать. Колхозниксем тимлĕн итлеççĕ. Нумай ыйтусем парса ыйтса пĕлеççĕ. Юнашар пӳлĕмре драмкружок «Парсин» пьесăна лартма хатĕрленет. Вуламалли пӳлĕмре 7—8 колхозник паян килнĕ хаçатсене вуласа лараççĕ тата çамрăксем шахматла выляççĕ. 12 сехет тĕлнелле колхозниксем килелле саланаççĕ.

В. ГУСЬКОВ.

Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсен, Великобританин тата Совет Союзĕн ют çĕршыв ĕçĕсен министрĕсен Мускавра пулса иртмелли канашлăвĕ çинчен

Декабрĕн 15-мĕшĕнче Мускавра Великобританин, Совет Союзĕн тата Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсен ют çĕршыв ĕçĕсен министрĕсем тĕл пулмалла. Тĕлпулу Ялтăри конференци йышăннă решени тăрăх пулать, çав конференцире висĕ ют çĕршыв ĕçĕсен министрĕсен канашлăвĕсем кашни висĕ уйăхран пулса иртмелле тесе йышăннă. Тĕлпулура Британи, Америка тата Совет правительствисем формальнăй йĕркепе мар, тĕпчев йĕркипе чылай ыйтусем пăхса тухма пултараççĕ, вăл ыйтусем çав висĕ çĕршывшăн питех те кирлĕ ыйтусем, çавăн пекех тата атом энергине контроллесе тăрас тĕлĕшпе пĕр-пĕрне хăйсем мĕнле шухăшлани çинчен калаçа кăтартма пултараççĕ.

УЙĂХ ТĔТТĔМЛЕННИ

Декабрĕн 19-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле уйăх тĕттĕмленет. Вăл Мускав вăхăчĕпе ирхине 3 сехет те 38 минутра тĕттĕмленме пуçлать те 4 сехет те 4 минутра тĕттĕмленсе çитет. Анчах, пĕтĕмпех тĕттĕмленсен те, уйăх хĕрри курăнать. Вăл хăмăр-хĕрлĕ тĕслĕ пулать. Уйăх хĕрри вăл хĕвел çуттин çĕр атмосфери витĕр тухнă пайăркисем çутатнă пирки курăнать. Хĕвел тухас умĕн уйăх тĕттĕмленме пăрахать.

Проф. К. ДУБРОВСКИЙ.

ФИНАНС ПЛАННЕ ПУР ТӲЛЕВСЕМ ТĂРĂХ ТА ТУЛТАРНĂ

ИШЛЕЙ. Кипечкасси ял Совечĕ (председателĕ С. Пайманов юлташ) финанс планне çулсеренех ăнăçлăн тултарса пырать.

Çавна май Кипечкасси ял Совечĕ IV-мĕш кварталти финанс планне декабрĕн 1-мĕшĕ тĕлне пĕтĕмпех тултарнă.

Ял Совечĕ пухнă самообложени укçипе халăха кирлĕ ĕçре усă курать. Акă кăçал «Красный танк» колхозра самообложени укçипе 4 çăл тунă, çичĕ çул вĕренмелли шкула юсанă.

Округри суйлав комиссийĕнче

Декабрĕн 1-мĕшĕнче Национальноçсен Советне суйлас тĕлĕшпе ĕçлекен 561-мĕш номерлĕ Чкаловски округри суйлав комиссийĕн ларăвĕ пулса иртнĕ. Ларура Чкаловски округа кĕрекен Елчĕк, Чкаловски, Комсомольски райсовет исполкомĕсем тăратнă суйлав участокĕсене пăхса тухса номерсем панă.

Чкаловски суйлав округĕнче пурĕ 93 суйлав участокĕ. Çав участоксенче халĕ суйлав комиссийĕсен составне кандидатсем тăратаççĕ, суйлавçăсен списокĕсене тăваççĕ, Сталинла Конституципе суйлав Положенине вĕренеççĕ.

Пирвайхи ларура округри суйлав комиссийĕ суйлав комиссин членĕсене округа кĕрекен районсенче суйлава мĕнле хатĕрленнине тĕрĕслеме хушнă. Суйлав комиссин 8 членĕнчен иккĕшĕ Чкаловски районра, иккĕшĕ—Комсомольски районра, виççĕшĕ—Елчĕк районĕнче суйлава мĕнле хатĕрленнине тĕрĕслеççĕ, вырăнти партипе совет организацийĕсене пулăшаççĕ.

Округри суйлав комиссийĕн членĕ П. Симуков юлташ Тăрăн ял Советне кĕрекен суйлав участокĕсенче ĕç мĕнле пынипе паллашнă хыççăн çакă паллă пулнă: кунти участоксенче суйлава çителĕклĕ тĕплĕн хатĕрленмеççĕ. Хăшпĕр çĕрте суйлавçăсен списокĕсене тĕрĕс мар тăваççĕ, Положение кирлĕ пек ăнлантармаççĕ. Суйлав Положенийĕ тăрăх, списоксене алфавитпа тумалла, анчах ял Совет секретарĕ Кузьмин юлташ списоксене хуçалăх кĕнекине пăхса кăна туса тухать. «Красное Батырево» колхозра суйлав Положенине ăнлантарас ĕçе япăх организациленĕ. Кунти агитатор-учительсем суйлавçăсем хушшинче ĕçлемеççĕ.

Округри суйлав комиссийĕн членĕсем палăртнă çитменлĕхсене çийĕнчех тӳрлетсе вырăнти совет организацийĕсене пулăшу параççĕ.

Т. ИВАНОВ.

Иван Мучи

(Çуралнăранпа 50 çул çитнĕ май)

1919 çул. Юнлă вăрçăпа суранланнă çамрăк Совет республики, хăйĕн иксĕлми вăйне çĕклесе, большевикла парти, Ленинпа Сталин ертсе пынипе, интервентсемпе шургвардеецсене аркатнă. Хĕрлĕ Çар сине çинех тата хытăран хытă пыра-пыра çапнине тÿсеймесĕр, Колчак хĕвелтухăçнелле, Урал еннелле тарнă. Хĕрлĕ Çар тăшмана сывлăш çавăрса илме памасăр хăваланă.

Хĕрлĕ Çарăн пĕр полкĕ Илецк хули патне çитнĕ. Пĕр ротăра, коммунистсем пуçарнипе, хăйне евĕрлĕ театр труппи чăмăртаннă. Боецсем хушшинчен сцена ĕçне юратакансене тупса, пысăках мар труппа организациленĕ. Каннă вăхăтра, походри привалсенче «артистсем», пĕр çĕрe пухăнса, спектакль лартма хатĕрленнĕ. Комиссар вĕсене темĕнле чĕлхерĕн куçарнă пьеса пырса панă, вара «театр» коллективĕ çине тăрсах ăна вĕренме тытăннă.

Тепĕр эрнерен, часть пĕр пĕчĕк яла çитсен, салтаксем хушшине хыпар сарăлнă: каçхине «артистсен» ротинче спектакль пулать, имĕш. Яла вырнаçнă пур «зрительсене» те курма май пултăр тесе, сценăна пăспа ĕçлекен арман картишĕнче тунă.

Спектакль чиперех пуçланнă, «артистсем» те хăйсен ролĕсене тăрăшса выляннă. Иккĕмĕш пайĕ пуçлансан, инçетре сасартăк пăшал-пулемет шатăртатни, унтан урамра тревога сасси янăраса кайнă. Тин çеç сцена çине тинкерсе пăхса ларакан боецсем, сиксе тăрса, урамалла ыткăннă. Вĕсем хыççăн, хăйсен винтовкисене тытса, сцена çинчи «артистсем» те сикнĕ, гримсене шăлса тăкма та вăхăт пулман. Ял хĕрринчи çĕр купи çумĕнче ытти красноармеецсемпе пĕрлех «чăнчăн король» винтовкăран персе выртнă. «Артист» король тумтирне хывса пăрахма, вăрăм çÿçĕпе сухал парикĕсене сÿсе ывăтма, пилĕкрен çакнă йывăç кинжалне пăрахса хăварма та ĕлкĕреймен.

Ир еннепе красноармеецсем шургвардеецсене ялтан инçете хăваласа янă, вара тин «артистсем» сцена çине каялла таврăннă.

— Вăт, çĕр çăтмансем, чи интереслă вырăна çитсен спектакле пăсрĕç,—ятланă вĕсем колчаковецсене, хăйсен парикĕсене сÿсе.—Эпир ку спектакле пурпĕрех тепре лартса паратпăр.

Пуринчен ытларах вĕсем хушшинчи король рольне вылякан çын тĕлĕнмеллерех курăннă.

Корольне вылякан боец—И. Н. Илларионов, чăвашсен пулас паллă писателĕ — Иван Мучи пулнă. Çамрăк Совет республики, хăйĕн çĕршывне тăшмансенчен тасатсан, миллионшар ĕççыннисем, винтовкăсене кирлĕ самантра каллех алла илме пуçтарса хурса, машинăсемпе, станоксемпе, акапуçĕпе ĕçлеме тытăннă. Иван Мучи хăйне кăмăла кайнă професси—сцена çинче ĕçлессине суйласа илнĕ. Анчах пурнăç ăна урăхла çул уçса панă,—вăл вара аллине вăрçăри хĕç пекех çивчĕ перо тытнă. Заметкăсенчен, кĕске сăвăсенчен пуçласа, Иван Мучи кĕçех хăйĕн тĕп йĕрĕ çине—сатирăллă-юморла калавсем çырас çул çине тухнă.

Иван Мучи творчестви çинчен сăмах пуçлас пулсан, чи малтан, вăл пурнăçпа пĕртан пыма тăрăшни çинчен, вăл яланах писатель-гражданин пулса, социализм строительствин активлă участникĕ пулма тăрăшни çинчен калас пулать. Кĕске калаçусенчен, вунă строкаллă юморескăсенчен пуçласа, чи пысăк калавĕсем таранччен, Иван Мучин пур произведенийĕсем те паянхи кунăн хĕрÿ ыйтăвĕсемпе çыхăнса тăраççĕ.

Совет республики хăйĕн çĕршывне интервентсемпе шургвардеецсенчен тасатнă хыççăн, Ленинпа Сталинăн аслă партийĕ ертсе пынипе, мирлĕ строительствăна пуçăннă. Анчах тăшмансем çак аслă аталану ĕçне салатса яма, совет халăхĕн пĕрлĕхне çĕмĕрсе такма тăрăшнă. Капитализмла элементсем ĕçхалăхĕн пĕр пайĕн тĕттĕмлĕхĕпе, культурăсăрлăхĕпе усă курса, Совет влаçне хирĕç кĕрешме пуçĕсене çĕкленĕ. Иван Мучин малтанхи калавĕсем хăйсен çивчĕшĕпе класс тăшманĕсене тÿррĕнех пырса çапакан сăнă пек тăраннă, ĕлĕкхи саманари кашкăрла закон вăхăтĕнчен тăрса юлнă йăларан тасалса çитеймен çынсене куçа уçма, чăнлăха курма вĕрентнĕ. Писатель-юморист, писатель-сатирик Иван Мучи хăйĕн çивчĕ чĕлхипе патша саманинчи ылханлă пурнăç çинчен каласа кăтартнă («Хуранлă çул», «Чышкă тытăмĕ», «Тĕшмĕш чăпти» т. ыт. те), çав тискер пурнăç каялла ан таврăнтăр тесен, совет государствине çирĕплетессишĕн ырми-канми ĕçлеме чĕннĕ.

Капитализмла стройри пурнăçăн кашкăрла законĕн йĕркисене пĕтерсе хурса, социализмлă строй общество пурнăçĕн чăн тĕрĕс законне — «кам ĕçлет—вăл çиет, кам ĕçлемест—вăл çимест», текен принципа туса хучĕ. Анчах капитализмла стройран тăрса юлнă кивĕ йăласем çил çинчи тĕтĕм пек сирĕлсе каймаççĕ. Çынсен ăстăнĕнче капитализмран тăрса юлнă киревсĕр йăласене пĕтерес тĕлĕшпе большевиксен партийĕ Октябрьти социализмлă революци пулнă хыççăнах çине тăрса ĕçлеме тытăнчĕ. Ку енĕпе совет литератури, социализмлă строительствăн активлă участникĕ пулса, хăйĕн пысăк вăйне, хăватне хăй партиллĕ пропагандăпа агитацин çивчĕ хĕçпăшалĕсенчен пĕри пулнине кăтартса пачĕ.

Чăваш халăхĕн илемлĕ литературинче те пултаруллă писательсемпе поэтсем ÿссе çитĕнчĕç, вĕсен йышĕнче писатель-юморист Иван Мучи паллă вырăн йышăнса тăрать.

Иван Мучин пултарулăхĕ, ĕçĕсем питех те нумай енлĕ тата çак ĕçсенче пуринче те вăл пурте асăрханмалла йĕрсем хăварнă. Кунта эпир Иван Мучи чăвашсен кулăшла литературин никĕсне хываканĕ, ăна малалла аталантарса пыраканĕ пулни пирки ытларах чарăнса тăрасшăн.

Иван Мучи хăйĕн творчествăлла вăйне уйрăмах Сталинла пилĕкçуллăхсем вăхăтĕнче, çĕршыва индустриализацилес, кулаксем класс пулса тăнине пĕтерсе ялхуçалăхне коллективизацилес тĕлĕшпе паттăрла кĕрешÿ пынă çулсенче лайăх кăтартса пачĕ. 1923 çулта унăн пĕррремĕш вырăсла кĕнеки пичетленсе тухнă, 1931 çулта «Колхоз çулне тухнă чух», «Хĕрлĕ кулăш», «Йĕплĕ калавсем» (ытти юлташсемпе пĕрле), кайрахри çулсенче—«Колхоз театрĕ», «Кулă-юмах—çуллă çăмах», «Кулăшла калавсем» пичетленсе тухнă.

Иван Мучи хăйĕн калавĕсене хăйне уйрăм майсемпе çырнă пирки чăвашсен ытти писателĕсенчен уйрăмах палăрса тăрать. Вулакансем, унăн çĕнĕ калавĕсене вуланă чух, авторăн ятне пăхиччен калава Иван Мучи çырнине тупса илеççĕ.

Хăй калавĕсенче Иван Мучи пирĕн общество аталанăвне чăрмантарса тăракан е хирĕç пыракан çынсене, йăласене питĕ çивĕччĕн питлет. 1929—1933 çулсем хушшинче çырнă произведенийĕсенче автор колхоз стройĕн тивлетне ăнланса çитеймен, вак буржуаллă шухăшсенчен хăтăлайман çынсенчен тăрăхласа кулать.

Çав произведенисем хушшинче «Хăрушă кун», «Тăрлай Васки авлапать», «Кĕрхи кунра пулса иртнĕ тамаша», «Пĕр вырăнта тапăртатни», «Йăлай Йăкăначĕ» калавсем уйрăмах палăрса тăраççĕ.

Писатель сахал сăмахпах—нумай шухăша, кĕске характеристикăпах çынăн чĕрĕ сăн-сăпатне кăтартса пама пултарать.

Акă кахал сăнĕ («Йăлай Йăкăначĕ»). Йăкăнат ĕçрен пăрăнма сăлтав шырать. Чире хывса пăхать вăл,—суйи тухать, вара ыттисене те ĕçлеме чарма хăтланать.

— «Кунта килнĕ чухне качака ман çинелле пăхса сухалне темиçе хутчен силлесе илчĕ. Ун пеккине курсан, ĕçлеме кайиччен кайманни усăллăрах пулать,—персе ярать вăл».

Çук, нимĕскер те пулăшмасть: колхозниксем унашкал «сухал силленисене» ĕненми пулнă.

Аслă Совет çĕршывĕ, сталинла пилĕкçуллăх планĕсене пурнăçласа, халиччен тĕнче историйĕ курман çĕнтерÿсем турĕ. Пирĕн çĕршыв хăватлă индустриллĕ, тĕнчипе чи малти вырăнта тăракан ялхуçалăхлĕ çĕршыв пулса тăчĕ. Эпир хамăрăн кулленхи пурнăçа, хамăр таврара пулса иртекен çĕнĕрен-çĕнĕ явленисене хăнăхса пыратпăр. Анчах пирĕн çĕршыври ÿсĕмсене хăй куçĕпе курман çынна сасартăк килсе кăтартсан, вăл мĕн калапĕ пулĕччĕ-ши? Çак ыйтăва хирĕç Иван Мучи «Иккĕшĕн икĕ чĕлхе пулнă», «Çирĕм çултан» калавсемпе ответлерĕ.

Пурнăç çине, пурнăçри çĕнĕ явленисем çине Иван Мучи яланах художник куçĕпе пăхать. Тепри асăрхамасăр иртсе кайма пултарнă пĕчĕк улшăнусене, çĕнĕ туртăмсене вăл, художник тĕкĕрĕ çине ÿкерсе, пурте асăрхамалла тăвать.

Иван Мучи—кĕске калавсемпе новеллăсен мастерĕ. Вăл çырнă 400—500 калавран пĕри те çур пичетлĕ листаран иртекенни çук. Хăшĕсем вара пурĕ те 15—20 йĕрке кăна. Анчах пăхăр-ха эсир вĕсен содержанийĕсене! Фольклор произведенийĕсемпе пĕртанах, вĕсенчен чылайĕшĕ, халăх репертуарне кĕрсе, юмахсем пек пулса кайнă.

Иван Мучи творчествин чи паллă енĕ вăл — халăх чĕлхин пуянлăхĕпе усă курма пĕлни пулать. Вăл çырнă произведенисенчен нумайĕшĕнче чăваш халăхĕн пултарулăхĕ сисĕнсе тăрать.

Вунултă çула яхăн Иван Мучи «Капкăн» журнал редакцийĕнче ĕçлерĕ. Чăваш литературишĕн питех те паха ĕçе пĕччен тытăнса, Иван Мучи тăван çырулăха пайтах çĕнĕ вăйсем, çĕнĕ талантсем хутшăнтарчĕ. К. Пайраш, Этмен, Н. Евдокимов, П. Тукташ, Л. Агаков, Н. Айзман, Е. Эллиев литературăри малтанхи утăмĕсене, малтанхи шкула «Капкăнра» вĕреннĕ.

Отечественнăй аслă вăрçă кунĕсенче Иван Мучи чăн-чăн совет патриочĕ пек ĕçлерĕ. Вăл темиçе фельетон çырса кăларчĕ, кĕнекесем хатĕрлерĕ, публицистикăллă тата критикăллă статьясем çырчĕ.

Пирĕн ĕççыннисем Иван Мучин литературăри ĕçĕсене тивĕçлипе хаклаççĕ. Чăваш совет литературин паллă деятелĕсемпе пĕрле Чăваш АССР правительстви ăна 1940 çулта Хисеплĕ грамота парса наградăларĕ.

Сывлăхĕ хавшакрах пулсан та, Иван Мучи çаннисене тавăрсах ĕçлет-ха. Вăл çитес çул пичетлесе кăларма «Сатирăпа юмор чăваш фольклорĕнче» ятлă кĕнеке çырать, фольклор материалĕсем тăрăх Чăваш халăхĕпе вырăс халăхĕ хушшинчи туслăх çинчен пысăк статья хатĕрлет.

Тата нумай çул пурăнма, пултаруллăн ĕçлеме ырă сунар хамăр юратнă Иван Мучине.

Хветĕр УЯР,
Н. ВОЛКОВ.

Нимĕçсен вăрçă пуçланăшăн айăплă тĕп преступникĕсене Нюрнберг хулинче суд тунă

ДЕКАБРĔН 6-мĕшĕнчи КАÇХИ ЛАРУ

НЮРНБЕРГ, декабрĕн 6-мĕшĕ. (ТАСС). Сăмаха Англи айăплаканĕсен представительне Гриффитс Джонс подполковнике параççĕ. Айăплакан çакна аса илтерет: 1939 çулхи август уйăхĕнче Англин ун чухнехи премьер-министрĕ Чемберлен тата Францин премьер-министрĕ Даладье Гитлера Польшăпа тÿрĕнех калаçу пуçласа яма сĕннĕ.

Августăн 24-мĕшĕнче Америка президенчĕ Рузвельт Гитлера, çавăнпа пĕр вăхăтрах тата Польша республикин президентне те тавлашуллă ыйтусене мирлĕ татса пама сĕннĕ. Августăн 25-мĕшĕнче, Германи правительствинчен ответ илменнине кура, Рузвельт татах Гитлер патне çыру çырнă. Айăплакан çакăнта Рузвельт çырăвĕн хăшпĕр вырăнĕсене вуласа парать. Хăйĕн çырăвĕнче Рузвельт çапла каланă: пур ыйтусене те Польша правительстви эпĕ хамăн çырура каласа панипе никĕсе хывса татса пама килĕшет, тенĕ. Германи правительствине Рузвельт çапла каланă: «Эсир тата Германи правительстви ыйтусене мирлĕ татса пама килĕшетĕр пулсан, ку чухнехи нацисем вара халĕ те пĕр-пĕринпе мирлĕ те телейлĕ сыхăнусем тытса пымалли никĕссем тупĕç. Эпĕ янă сĕнÿсене Польша правительстви йышăнчĕ».

Гитлерла Германи çак сĕнÿсене йышăнмарĕ, тесе аса илтерет трибунала айăплакан. Çав вăхăтра Германи Польшăна тапăнма хатĕрленнине пытарма çеç тăрăшнă. Унтан айăплакан пулса иртнĕ событисем çинчен пĕтĕçтерсе каласа парать. Трибунала вăл çакна пĕлтерет: августăн 24-мĕшĕнче Германи çарне Польша çĕрĕ çине кĕрсе кайма приказ панă. Çакăн хыççăн вара Германи правительстви Британипе Польша правительствисем пĕр-пĕрне тапăнмалла марри çинчен тата пĕр-пĕрне пулăшасси çинчен тин çеç договор тунине пĕлнĕ. Англи премьер-министрĕ парламентра çакна пĕлтернĕччĕ, тесе аса илтерет айăплакан: Польшăпа Англие кам та пулин тапăнсан, вĕсем пĕр-пĕрне пулăшĕç. Çакăн пек каланине апрелĕн 26-мĕшĕнче пичетлесе кăларнă. Вара Германи Польшăна тапăнассине тепĕр вăхăта хăварчĕ, анчах та Германи Англипе Франципе вăрçа хутшăнтарас мар тесе кăна çапла турĕ. Августăн 25-мĕшĕнче Гитлер Англи посолне Гендерсона заявлени панă. Çав заявленире Гитлер хăратса тата йăлăлтатса акăлчансен кăмăлне çавăрма хăтланса пăхнă. Августăн 28-мĕшĕнче Гендерсон Германие ответ панă. Çав ответра вăл Польшăпа Германи хушшинчи хирĕçÿсене мирлĕн татса памалла, тенĕ.

Августăн 29-мĕшĕнче 7 сехет те 15 минут каçхине Гитлер Гендерсона çапла ответ панă: Германи правительстви калаçусем пуçласа яма хатĕр. Анчах та çав калаçусене пуçличчен Германие Данцигпа Польша коридорне тавăрса памалла. 1934 çулта Польша договора пăсрĕ, тесе çирĕплетнĕ Гитлер. Çакăнпа пĕрлех Германи пурнăçа кĕртме май килмен требовани кăларса тăратнă: калаçусем тумашкăн Польшăн августăн 30-мĕшĕнче 12 сехет çĕрлерен кая юлмасăр чрезвычайнăй уполномоченнăй ямалла пулнă. Çак требование ĕнтĕ Германи Польша йышăнманнине пĕле тăркачах кăларса тăратнă, мĕншĕн тесен Польшăн уполномоченнăйĕ çав асăннă вăхăтра ниепле те Германие çитме пултарайман. Тĕрĕссипе каласан, Германин çак требованийĕ ультиматум пулса тăрать, тенĕ ун чухне Гендерсон. Августăн 30-мĕшĕнче 12 сехетре çĕрле Гендерсон Риббентроппа тĕл пулнă. Риббентроп Германипе Польша правительствисем пĕр-пĕринпе калаçнă пулсан, Германи мĕнле сĕнÿсем кăларса тăратма хатĕрленнине нимĕçле питĕ хăвăрт вуласа панă. Анчах та çав сĕнÿсене çырнă хута Риббентроп Англи посолне пама килĕшмен. Çапла ĕнтĕ, тесе асăрхаттарать айăплакан, Германи сÿтсе-явма хатĕрленĕ ыйтусемпе сĕнÿсене хирĕç мĕнле ответ памаллине шутласа пăхма поляксен нимĕнле май та пулман. Августăн 31-мĕшĕнче Польша посолĕ Липский Риббентроппа тĕл пулнă. Липский вăл чрезвычайнăй уполномоченнăй пулманнине пĕлсен, Риббентроп çапла каланă: кун çинчен эпĕ Гитлера пĕлтерĕп, тенĕ. Анчах та, тесе асăрхаттарать малалла айăплакан, Гитлера мĕн те пулин каласа пама кая юлнă, мĕншĕн тесен августăн 31-мĕшĕнче Гитлер хăйĕн пĕррремĕш номер директивине, урăхла каласан, вăрçă пуçласа ямалли приказа панă. Çав приказра вăл наступлени пуçламалли вăхăта 4 сехет те 45 минутра палăртнă. Августăн 31-мĕшĕнче каçхине Германири радио Риббентроп иртнĕ кун Гендерсона кăтартнă сĕнÿсене пама тытăнчĕ. Радиопередачăра çапла каланă: çаксем ĕнтĕ сÿтсе-явма кăларса тăратнă сĕнÿсем пулаççĕ, анчах та Польшăн полномочнăй представителĕсем килменнине кура, Германи çав сĕнÿсене Польша йышăнман тесе шутлать, тенĕ. Германин сĕнĕвĕсем мĕнле пулнине поляксем çак каçхине чи малтанхи хут илтнĕ.

Англи айăплаканĕн представителĕ трибунала тепĕр документа—Герингран ыйтнине çырса пынă протоколăн пĕр вырăнне шута илме сĕнет.

Айăплакан Геринга ыйтса пĕлнине çырса пынă протоколăн çав вырăнне вуласа парать. Унта Геринг çапла калать: Англи Польша тĕлĕшпе илнĕ обязательствăсене пурнăçа кĕртессине Гитлер ĕненмен, тенĕ. Çакăнтах Геринг тата çапла каланă: 1939 çулхи кризис вăхăтĕнче эпĕ Галифакс лордпа дипломати йĕркипе мар, специальнăй курьер урлă тăтăшах сыхăну тытса тăтăм.

Айăплакан Британин Кăвак кĕнекинче пичетлесе кăларнă Гитлер сăмахĕн хăшпĕр вырăнĕсене вуласа парать. Гитлерăн çав сăмахĕнчен акă мĕн курăнса тăрать: Англие Польша тĕлĕшпе илнĕ обязательствăсене пурнăçа кĕртме май парас мар тесе тăрăшнă Гитлер.

Перерыв хыççăн Джонс подполковник трибунал умĕнче гитлерла каварлашуçăсен Польшăна хирĕç тунă ирсĕр ĕçĕсем çинчен тĕплĕн каласа парать. Нумай документсемпе—Германин ют çĕршыв ĕçĕсен министерствинче çырнă çырусемпе, посолсен çырăвĕсемпе тата официальнăй декларацисемпе (вĕсенчен чылайĕшне Англин Кăвак кĕнекинче, Францин Сарă кĕнекинче тата Польша правительствин официальнăй пĕлтерĕвĕсенче пичетлесе кăларнă) айăплакан Германи правительстви тĕнче вăрçине малтанах тĕплĕн шутласа пуçласа янине кăтартса парать. Германин гитлерла руководителĕсемшĕн Польша питĕ лайăх позици пулса тăнă: вăл Германи хĕвеланăçнелле тапăннине хÿтĕленĕ, унтан тата Совет Союзне тапăнмалли плацдарм пулса тăнă. Айăплакан Польшăна тапăнма Германи мĕнле хатĕрленнине питĕ тĕплĕн каласа парать. 1939 çулхи август уйăхĕнче нимĕçсем хăйсен хатĕрленĕвĕсене тĕрлĕрен дипломатиллĕ ĕçсемпе пытарса пынă.

Айăплакан çапла калать: нимĕçсем Польша умне кăларса тăратнă хăйсен требованийĕсене çырса хатĕрличчен чылай малтан Гитлер Польшăна тапăнма приказ парса тапăнмалли куна палăртнă.

Айăплакан Англипе Франци Германие хирĕç мĕнле вăрçă пуçласа янине те каласа парать. Англипе Францин ĕçĕсем, тет айăплакан, агрессиллĕ ĕçсем пулман, мĕншĕн тесен Англипе Франци договор тăрăх илнĕ хăйсен тивĕçĕсене çеç тÿрре кăларма тăрăшнă. Айăплакан Англи правительстви Германи правительствине панă ультиматума вуласа кăтартать. Унта вăрçа чарма тата Германи çарĕсене Польшăран илсе тухма хушнă.

Çав ультиматумра Англи правительстви: эпĕ Польша тĕлĕшпе илнĕ хамăн обязательствăна пурнăçа кĕртме Польшăна пулăшма тытăнатăп, тесе пĕлтернĕ. Германи правительстви çав ультиматума йышăнман. 1939 çулхи сентябрĕн 3-мĕшĕнче Англипе Франци Германие хирĕç вăрçă пуçласа янă.

Айăплакан сентябрĕн 2-мĕшĕнче Муссолини Гитлер патне янă çырăва вуласа парать. Çав çырура Муссолини—Германи, Итали, Франци, Англи тата Польша представителĕсен конференцине пухма сĕнсе, унта çак ыйтусене сÿтсе-явма палăртать: «1) çарсене вăл халь тăнă вырăнтах хăварса перемири тăвасси; 2) икĕ-виçĕ кун хушшинчех конференци пухасси; 3) Польшăпа Германи хушшинчи тавлашăва татса парасси, кунта ыйтăва Германи майлă татса памалла».

Сентябрĕн 3-мĕшĕнче Гитлер Муссолини патне янă ответра çапла каланă: эпĕ вăрçа чарма шутламастăп, мĕншĕн тесен вăрçăра эпĕ мирлĕ калаçусемпе тунă ăнăçусенчен ытларах ăнăçу тума пултаратăп, тенĕ.

Муссолинипе Гитлер пĕр-пĕрин патне янă çырусене вуласа панă хыççăн, Джонс подполковник Польшăна хирĕç нимĕçсем мĕнле каварланни тата ăна мĕнле пурнăçа кĕртни çинчен каласа хăйĕн сăмахне пĕтерет.

Трибунал Англи айăплаканĕсен тепĕр представительне Эльвин Джонса сăмах парать. Хăйĕн сăмахĕнче вăл нимĕçсем Данипе Норвегие хирĕç агрессиллĕ вăрçă пуçласа янине каласа парать. Айăплакан çапла калать: çав çĕршывсене Германи, Гаагăри конвенцие тата Германипе çав çĕршывсем хушшинчи нумай договорсемпе килĕшÿсене пăсса, 1940 çулхи апрелĕн 9-мĕшĕнче тапăнчĕ. Норвеги территорийĕн никам тĕкĕнменлĕхне гаранти парса Германи икĕ договор тунă. Германипе Дани пĕр-пĕрне тапăнмалла марри çинчен договор тунă. Çав договора вара нимĕçсем пĕр çулталăк çитиччен пăснă. Айăплакан трибунала питĕ паха документ парать. Çав документа «национал-социалистсен партийĕн тулашри политика департаменчĕ 1933—1943 çулсенче тунă ĕçсен кĕске отчечĕ» тесе ят панă. Документа айăпланакан Розенберг çырса алă пуснă. Документран çакă курăнса тăрать: «тулашри политика департаменчĕ» вăл шпионсен йăви пулнă, унта диверсантсемпе шпионсене вĕрентсе хатĕрлесе вĕсене нимĕçсем кăмăллакан çĕршывсене ярса тăнă.

Скандинавири çĕршывсене хирĕç агрессиллĕ вăрçă пуçлама хатĕрленес ĕçре нимĕçсен генералитечĕ гитлерла руководительсемпе таччăн çыхăнса ĕçленине палăртса, айăплакан çапла калать: çакăнта эпĕ вуласа панă документсем «Германин çар лидерĕсем унăн политика лидерĕсемпе таччăн çыхăнса пынине, Германири профессионал-салтаксемпе профессионал-ултавçăсем, каварлашуçăсем пĕр-пĕрне килĕштерсе ĕçленине» питĕ лайăх кăтартса параççĕ.

Каçхи лару çакăнпа хупăнать.

ДЕКАБРĔН 7-мĕшĕнчи ИРХИ ЛАРУ

НЮРНБЕРГ, декабрĕн 7-мĕшĕ. (ТАСС). Паян ирхи ларура Англи айăплаканĕсен представителĕ Эльвин Джонс майор хăйĕн сăмахне малалла каланă. Вăл Германи Норвегипе Данине хирĕç агрессиллĕ вăрçă пуçласа янине ĕнентерекен документсем кăтартса панă. Германин верховнăй командованин архивĕсенче тупнă вăрттăн документсем тăрăх, айăплакан гитлерла Германири политика руководителĕсемпе çар руководителĕсем пĕр-пĕринпе пĕр шутлă пулса ĕçленине тĕплĕн кăтартса парать. Çав руководителсен шутне Кейтеле, Иодле, Редере тата Деница кĕртмелле. Германин милитаристла пуçлăхĕсен представителĕсем, Германи парăннă хыççăн, эпир Гитлерпа гитлерла партин руководителĕсем тытса пынă тулашри политикăшăн айăплă мар, тесе ĕнентерме тăчĕç, эпир хамăрăн правительствăн приказĕсене тÿрĕ кăмăлпа пурнăçа кĕртнĕ дисциплинăна пăхăнакан салтаксем çеç пулнă, терĕç.

Айăплакан документсем тăрăх çакна кăтартса парать: Германин хĕçпăшаллă вăйĕсен руководителĕсем Гитлерпа унăн ушкăнĕн мĕнпур ирсĕр шухăш-кăмăлĕсене ырланă, договорсене тата вăрçă вăрçмалли правилăсене пăсас ĕçе активлăн хутшăннă. Норвегипе Дание Германи темиçе хутчен те мирлĕ обязательствăсем панă. анчах та 1939 çулта вăрçă пуçланнă хыççăнах вăл çав çĕршывсене тапăнма активлăн хатĕрленнĕ. 1939 çулхи декабрĕн 12-мĕшĕнче Гитлер тинĕс штабĕн канашлăвне туса ирттернĕ. Çав канашлура Кейтель, Иодль тата Путткамер адмирал пулнă. Çав ларура тинĕс-çар флочĕн главнокомандующийĕ Редер хăй Квислингпа Хагелина курни çинчен каласа панă. Квислинг Редера çапла каланă: Норвеги çарĕнчи офицерсем хушшинче манăн лайăх сыхăнусем пур, унта ман пек шухăшлакан çынсем те чылай, вĕсем пысăк вырăнсенче, сăмахран, чугун çулсем çинчи пысăк вырăнсенче ĕçлеççĕ. Квислинг правительствăри влаçа хăй аллине илсе Германие пулăшма чĕнме хатĕр пулнă. Çавăн пекех тата вăл Германин хĕçпăшаллă вăйĕсен представителĕсемпе вăрçа хатĕрленмелли ыйтусене сÿтсе-явма та хатĕр пулнă. Документран çакă курăнать: Квислинг мĕнле çын иккенне пĕлес тесе, Гитлер ăна хăйне курасшăн пулнă. Унтан айăплакан Асман адмиралăн меморандумне вуласа парать. Çав меморандум çине Редер алă пуснă. Меморандумра çапла каланă:

«Ослори тинĕс атташи Шрейдер Розенберг организацийĕпе сыхăнса тăрать. Çапла ĕнтĕ эпир Квислингпа тата Хагелинпа çыхăнма май тупрăмăр. Вĕсем декабрь уйăхĕн пуçламĕшĕнче Берлина килчĕç те эпĕ вĕсене, рейхслейтер Розенберг ырланă тăрăх, фюрер патне илсе пытăм. 1939 çулхи декабрĕн 14-мĕшĕнче фюрер Квислингпа тата Хагелинпа калаçнă хыççăн, фюрер хĕçпăшаллă вăйсен верховнăй командованийĕ Норвегие тапăнма приказ пачĕ». 1940 çулхи январĕн 27-мĕшĕнче айăпланакан Кейтель тинĕс-çар флочĕн командующине Редера директива ярса панă. Унта çапла каланă: «фюрерпа хĕçпăшаллă вăйсен верховнăй главнокомандующийĕ çапла тума шутларĕç: малашнехи операцисене эпĕ ертсе пырăп, вĕсем мĕнпур вăрçă политикипе таччăн сыхăнса пулмалла. Çавăнпа та фюрер мана хатĕрленес тĕлĕшпе малалла тумалли ĕçсене пурне те хам çине илме хушрĕ. Çакна май хĕçпăшаллă вăйсен верховнăй командованийĕ çумĕнче уйрăм штаб туса хунă. Вăл ĕнтĕ пулас оперативнăй штабăн никĕсĕ пулса тăрать. Çав мĕнпур операцие малашне вăрттăнлатса «Везерти маневрсем» тесе каламалла. Кейтель».

Айăпланакан Иодль февралĕн 6-мĕшĕнче хăйĕн дневникне çапла çырса хунă: «Çĕнĕ идея: «Везерти маневрсем» пурнăçа кĕрессĕ тата вăрçă вăхăтĕнче Бельги нейтралитет тытса пыма сăмах пачĕ». Февралĕн 21-мĕшĕнче Иодль çапла çырнă: «фюрер Фалькенхорст генералпа калаçрĕ, ăна «Везерти маневрсене» ертсе пыма хушрĕ. Фалькенхорст хавасланса килĕшрĕ. Пур тĕрлĕ çарсене те инструкцисем панă». Дневникра çырнисем Норвегие тапăнмалли плана пурнăçа кĕртес тĕлĕшпе Иодль активлăн ĕçленине питĕ лайăх кăтартса параççĕ.

1940 çулхи мартăн 1-мĕшĕнче Гитлер хăй алă пусса приказ кăларнă. Ăна «Везерти маневрсен планĕ» тесе ят панă. Çав приказра çапла каланă: «Скандинавири лару-тăрусем аталанса пыни Данипе Норвегие оккупацилеме хушаççĕ. Çак операцин ĕнтĕ Скандинавипе Балтика тинĕсне Британи пырса кĕрессине чармалла, çавăн пекех пире Швецирен тимĕр рудине илсе тăма май памалла, пирĕн флотпа авиацие Англие хирĕç кĕрешме çĕнĕ майсем туса памалла». Çав приказрах малалла çапла каланă: «Пирĕн çарсен пĕр вăхăтрах Дани чикки урлă та каçмалла, Норвегие те анма тытăнмалла. Çак операцисене туса ирттерме май килнĕ таран хăвăртрах хатĕрленмеллине эпĕ тепĕр хут çирĕплетсе калатăп. Скандинавири çĕршывсене, çавăн пекех тата пирĕн хĕвеланăçĕнчи тăшмансене те эпир кĕтмен çĕртен пырса çапни аптăратса ÿкерни питĕ паха».

«Везерти маневрсене» мĕнле иртмеллине 1940 çулхи апрелĕн 4-мĕшĕнче Редер панă приказра питĕ лайăх кăтартса панă. Çав приказра çапла каланă: «пирĕн карапсен портсем патне суту-илÿ карапĕсем пек пулса пымалла. Вĕсем çинче акăлчансен паллисем пулмалла. Вĕсене Норвегин хурал суднисем тытса чарсан, норвежецсемпе акăлчанла калаçмалла, Британи ялавне юриех çутатмалла. «Ăçта каятăр?» тесе ыйтсан: «кĕске вăхăтлăха Бергена каятпăр-ха. Сире усал тума шутламастпăр», тесе каламалла. Германи карапĕсен çичĕсене акăлчанла ятсем памалла. Чарас тесе йоме тытăнсан: «цеме чарăнăр, Британи карапĕсем. Сирĕн тусусем», тесе ответ памалла».

1940 çулхи мартăн 30-мĕшĕнче айăпланакан Дениц «Хартмут операцийĕ» ятлă приказ панă. Çав приказра Данипе Норвегие тытса илмелли плансем çинчен каланă. Çав приказăн 5-мĕш пунктĕнче çапла каланă: тинĕс-çар вăйĕсен портсене пырса кĕрсен те, çарсем анса пĕтиччен, Британи ялавне антармалла мар.

Унтан айăплакан Германи Норвегие панă ультиматума вуласа кăтартать. Çав ультиматумра çапла каланă: Норвегие Англипе Франциран хÿтĕлес тесе, Германи ăна оккупацилеме шутларĕ, тенĕ.

Апрелĕн 9-мĕшĕнче Германи фашисчĕсем Норвегипе Данине тытса илнĕ. Дание мĕнле тытса илнине Дани правительствин меморандумĕнчен те курма пулать. Çав меморандумра çапла каланă: «1940 çулхи апрелĕн 9-мĕшĕнче 4 сехет те 20 минутра Германи посланникĕ авиаци атташипе пĕрле Данин ют çĕршыв ĕçĕсен министрĕн частнăй резиденцине пычĕ. Унпа 4 сехетре ирхине тĕл пуласси çинчен ют çĕршыв ĕçĕсен министерствин генеральнăй секретарĕ калаçса татăлнă. Посланник тÿрех çапла пуçларĕ: Великобритани Данипе Норвегири базăсене оккупацилеме шутлани çинчен Германин витĕмлĕ документсем пур, çавăнпа та Германи Данипе акăлчансенчен хÿтĕлеме шутлать. Çакна шута илсе ĕнтĕ Германи салтакĕсем çак самантра чикĕ урлă каçаççĕ тата тĕрлĕ портсенче, вăл шутра Копенгагенра та Дани çĕрĕ çине анаççĕ. Тепĕртакран Копенгагена Германи бомбардировщикĕсем вĕçсе килĕç, анчах та вĕсем, кăтарту пличчен, бомбăсем пăрахмĕç. Дани халăхĕн, инкек курас мар тесен, Германи çарĕсене хирĕç тăмалла мар».

Германи Данипе Норвегие мĕншĕн тытса илни çинчен суйса каланине Данипе Норвегири Германин тинĕс штабĕн оперативнăй отделĕн начальникĕ Фрике 1940 çулхи июлĕн 3-мĕшĕнче çырнă меморандумран та лайăх курăнать. Çав меморандумра Фрике çапла каланă: вăрçă вăхăтĕнче туяннă Дани, Норвеги тата Çурçĕр Франци территорийĕсене оккупацилемелле. Унти ĕçе малашне вĕсем Германи çĕршывĕ пулмаллине шута илсе организацилемелле».

10 минутлăх перерыв хыççăн Англи айăплаканĕсен представителĕ Робертс сăмах каланă. Хăйĕн сăмахĕнче вăл Германи Голландие, Бельгие тата Люксембурга тапăнни çинчен каланă. Малтанах вăл Германин çав çĕршывсемпе пĕр-пĕрне тапăнмалла марри çинчен тунă мĕнле-мĕнле договорсем пулнине аса илтернĕ.

1938 çулхи августăн 25-мĕшĕнче, тет айăплакан, Германин генеральнăй штабĕ вăрттăн приказ панă. Çав приказра, Великобританипе тата Францие хирĕç вăрçă пулас пулсан, Бельгипе Голландине тытса илмеллине палăртнă. «Бельгипе Голландие тытса илни,—тенĕ çав приказра, — Германишĕн питĕ усăллă пулĕ. Вăл Великобританипе Францие сывлăшран пырса çапас ĕçре уйрăмах пысăк усă парĕ. Çавăнпа та çав ĕçе тума кирлĕ условисене тата вĕсене мĕн чухлĕ вăхăт хушшинче тытса илме май килнине халех палăртса хумалла».

1939 çулхи майăн 23-мĕшĕнче Гитлер патĕнче конференци пулнă. Çав конференцире çырса пынă протоколăн хăшпĕр вырăнĕсене Америкăпа Англи айăплаканĕсен представителĕсем трибуналăн иртнĕ ларăвĕсенче темиçе хутчен те вуласа панă. Çав документа Гитлерăн адъютанчĕ Шмундт çырнă. Вăл çав асăннă конференцире Геринг, Редер, Браухич, Мильх, Гальдер, Боденшатц, Ешонек, Варлимонт тата ыттисем те пулнине кăтартнă. Çав конференцире Гитлер çапла каланă: Голландипе Бельгири аэродромсене Германин хĕçпăшаллă вăйĕсем йышăнса илмелле, тенĕ. «Нейтралитет çинчен каланине шута илмелле мар», тенĕ Гитлер. Гитлер 1939 çулхи августăн 22-мĕшĕнче Обер-Зальцбургра çарсен командующийĕсем умĕнче каланă сăмах та Германи Бельгипе Голландин нейтралитетне пăсма хатĕрленнине кăтартса парать. «Çав операцисене питĕ анлăн тумалла, çав операцин тĕллевĕ вăрăм фронта йышăнса тăракан французсен çапăçури çарне парăнтарасси, çавăн пекех тата Голландин, Бельгин тата Çурçĕр Францин пысăк районĕсене тытса илесси пулать. Çав территорире эпир хамăрăн базăсене туса хурăпăр, çав базăсенчен вара эпир Англие сывлăшран та, тинĕсрен те пыра-пыра çапăпăр. Çакăнпа пĕр вăхăтрах хамăршăн питĕ паха Рур районне хÿтĕлĕпĕр». 1940 çулхи майăн 10-мĕшĕнче Германи çарĕсем Бельгие, Голландие тата Люксембурга кĕрсе кайнă.

Ирхи лару çакăнпа пĕтет.

Ответлă редактор заместителĕ Н. С. СТЕПАНОВ.

Завода хуралта ĕçлеме работниксем кирлĕ.

Пĕччен пурăнакан арçынсемпе хĕрарăмсене, 18 çултан пуçласа 55 çула çитнисене илеççĕ.

Илнĕ çынсене укçасăрах тумтир параççĕ, хваттере вырнаçтараççĕ, кунне виçĕ хутчен апат çитереççĕ тата уйăхне 170 тенкĕ укçа тÿлеççĕ.

Çак адреспа ыйтса пĕлмелле: гор. Чебоксары, Чапаевский рабочий поселок, Отдел найма и увольнения. Телефоны 6—99 и 0—26.

Завод дирекцийĕ.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: гор. Чебоксары, ул. Володарского, 5. Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн—0-67, заместителĕн — ..., секретариатăн—4-26, пропаганда пайĕн—2-89, парти пурнăç пайĕн—3-97, промышленность пайĕн—3-99, ялхуçалăх пайĕн—3-99, рабселькорсен пайĕн—0-67, издательство конторин — 0-23.

00471 Типографи ... ЧАССР ... 1 п. л. Тираж 16.000 экз.